Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

51 (7582) № ✻ Шăмат кун, 2008 çулхи июлĕн (утă) 12-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Выльăх апачĕ хатĕрлес маршрутпа**

## Ут çи кашниншĕнех хĕрӳ ĕç çи

Ăшă, хушăран çумăрлă утă уйăхĕ халăха та, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене те выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре кашни уяр саманта туллин усă курма ыйтать. Малашлăха пăхакан ял çынни çапла тăвать те.

Хам «Свобода» хуçалăх территоринче пурăннăран ăратлă выльăх завочĕн механизаторĕсем çитес хĕл валли çителĕклĕ выльăх апачĕ хатĕрлессипе хĕвелпе пĕрле тăрса мĕн сĕм тĕттĕмччен ĕçлени куç умĕнче. Кашмашсемпе Çатракассисен çу кунĕсенче бизнес-планпа килĕшӳллĕн 940 тонна утă, 2196 тонна сенаж, 900 тонна силос янтăламалла. Çак ĕç паян çӳллĕ шайра пырать.

Шуçăмпа пĕрле майлах Н. Максимов, Г. Алжиров, А. Матвеев механизаторсем курăк çулма тухаççĕ. Ĕç валли тĕплĕ хатĕрленĕ техникăпа яра кунах вĕсем улăхçаранта. Типĕ курăка преслассипе И. Николаевпа И. Васильев тата А. Чиновников тăрăшаççĕ, пĕр уяр сехете те ĕççĕр ларса ирттермеççĕ.

– Ĕç условийĕсем паллă, пире вĕсем паянхи кун туллин тивĕçтереççĕ, – тет питрен ăшă кулă вĕçертмен И. Николаев нумай çул ӳсекен курăксен анине малалла пăхса.

Юнашар уйра сенаж масси хатĕрлессипе КПКУ-75 тата КСК-100 агрегатсемпе А. Соловьевпа Н. Васильев тимлеççĕ. Хиртен вара пĕрин хыççăн тепри сенаж тиенĕ автомашинăсем сĕт фермине çул тытаççĕ. Кунта А. Савельев, Н. Давыдов (сăн ӳкерчĕкре), А. Алжиров, В. Степанов, Ю. Шаров, К. Шаров, В. Ефремов, Н. Максимов водительсем хастар.

– Ĕçлетпĕр-ха та, анчах çанталăкĕ уяр кунне сахалрах парать-ха. Ку условисенче уяр кунăн кашни минучĕ-сехечĕпе туллин усă курасси – пĕрремĕш тĕллев, – терĕ хуçалăх ертӳçи К. Сретинский хирелле çул тытнă май.



Хуçалăхра выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçе йĕркелесе пыракан Е. Демьянова зоотехник ĕнер çак ĕç пин тонна урлă иртессе пĕлтерчĕ.

Сенаж шăтăкĕ çинче вара Ю. Максимовпа Г. Валежников механизаторсем пĕр чарăнмасăр курăка пусăрăнтарса тăраççĕ. Хуçалăх сенаж-силос хатĕрлессине кăçал çĕнĕ технологипе пурнăçлама 3 пин тоннăлăх кальци пропионачĕ консервант илсе килнĕ. Çакă хĕл кунĕсенчи пысăк тухăç никĕсĕ пулнине ăнланаççĕ кунта.



Кӳршĕллĕ Ятман тăрăхĕнче вара ял çыннисем килти хушма хуçалăх валли уйăрса панă 60 сотка çĕрсем çинчи утăна пуçтарса кĕртессипе тимлеççĕ. Хирте ачасем те йышлă, çынсен харпăрлăхĕнчи техника та утă çийĕ вăхăтлăх пулăм пулнине шута илсе ĕçлет.

Çапла вара ут çи кашниншĕнех хĕрӳ ĕç çи паян. Туллин усă курса юласчĕ унпа.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Июлĕн 13-мĕшĕ – Раççей почтин кунĕ**

**ПОЧТА ÇЫХĂНĂВĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире професси уявĕпе – Раççей почтин кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!**

Сирĕн ĕç тĕрлĕрен ĕç проблемисене татса парассин вăхăтне кĕскетет, хуласемпе континентсене пĕрлештерет, çывăх çынсемпе хутшăнтарать. Хальхи условисенче эсир тĕрлĕ ĕç пурнăçлатăр: пенсисемпе пособисем тӳлесе тăнинчен тытăнса Интернет пулăшăвĕ таранах.

Чи çĕнĕ технологисене пурнăça кĕртсе пырса, Раççей почти экономикăпа бизнеса аталантарма пулăшать, çынсен ӳссе пыракан ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерме май парать. Çавна май почта ĕçченĕсен вăхăт ыйтăвĕсене тивĕçтерес тесе хăйсен професси ăсталăх шайне ӳстермесĕр те май çук. Палăртмалла: эсир хальхи вăхăтăн чи пысăк ыйтăвĕсене тивĕçтеретĕр.

Хăйсен пурнăçне почта çыхăнăвĕпе çыхăнтарнă хĕрарăмсене уйрăм тав сăмахĕ каласшăн. Кирлĕ информацие вăхăтра тата тĕрĕс çитересси сирĕн хулпуççи çине тиенет. Ветерансене те тав сăмахĕ калатăп. Вĕсем чи ырă традицисене типтерлĕ упраççĕ, професси ăсталăхĕн вăрттăнлăхсем пирки çамрăк ăрупа канашлаççĕ.

Почта ĕçченĕсем хăйсен ĕçне малашне те тивĕçлипе пурнăçласса шанса тăратăп. Сире тата сирĕн çывăх çынсене çирĕп сывлăх, ăнăçусем, телей сунатăп.

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н. ФЕДОРОВ.**

---

**ХИСЕПЛĔ ПОЧТА ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире хăвăрăн професси уявĕпе – Раççей почтин кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.**

Эсир обществăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç тăватăр. Районта пурăнакансене тĕрлĕрен хаçат-журнал çырăнтаратăр, тĕнчери, республикăри, районти çĕнĕ хыпарсене, тус-юлташсемпе тăвансен чĕререн тухакан сăмахĕсемпе саламĕсене килсене вăхăтра илсе çитеретĕр. Пурнăç улшăнса пынă май эсир халăха паракан пулăшусем те хушăнсах пыраççĕ. Сирĕнтен кашниех хăйĕн ĕç вырăнĕнче професси тивĕçне кирлĕ пек пурнăçласа пырать. Районăн социаллă-экономика аталанăвĕнче эсир курăмлă вырăн йышăнатăр. Тавах сире пархатарлă ĕçшĕн.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳпе юрату сунатăп. Ыр кăмăлпа ăшпиллĕх сирĕн пĕрре те ан иксĕлтĕр.

**Район пуçлăхĕ**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

**Симĕс ĕç çи ыйтăвĕсемпех**

## Çĕр ĕçченĕн – çĕр ĕç

***Пĕр хушă тăтăш çунă çумăр симĕс ĕç çинче чăрмав кӳчĕ. Юлашки кунсенче шăрăх пулнă çанталăкăн кашни саманчĕпе усă курма тăрăшаççĕ ял ĕçченĕсем. Акă мĕнле хак парать выльăх апатне хатĕрлес тапхăра район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.К. АНАНЬЕВ.***

– Çанталăк симĕс ĕççине чăрмав кӳчех-ха ĕнтĕ. Кăна йышăнмаллах. Çуркунне сивĕрех пулнипе курăксем часах пулса ĕлкĕреймерĕç. Апла пулин те уйрăм хуçалăхсем çак условисенчех выльăх апатне сахал мар хатĕрлеме пултарчĕç. «Герой» хуçалăхра силоса 1500 тонна патне янтăларĕç те. Çавăн пекех силос хатĕрлес ĕç Ильич яч. хис., «Свобода», «Ударник» хуçалăхсенче кал-кал пырать. Пĕтĕмпе вара районĕпе ку выльăх апатне 20617 тонна хатĕрлемелле. Сенажа 15880 тонна хатĕрлеме палăртнă.

Йывăртарах пулин те, утă хатĕрлесси те вăй илсех пырать. Пурĕ 10 200 тонна хатĕрлемелле пулсан, хальлĕхе ăна палăртнин 10 процентĕнчен ытла янтăланă. «Восток», Ильич яч. хис., «Оринино», «Ударник», Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис. тата ытти хуçалăхсенче ку енĕпе уйрăмах хастар ĕçлеççĕ.

Çав хушăрах выльăх апатне хатĕрлес ĕç хăвăртлăхĕ пĕчĕк хуçалăхсем те çук мар. К.Иванов яч. хис., Ленин яч. хис., «Рассвет», «Хлебороб» хуçалăхсен хытах туртăнмалла ку енĕпе.

Нумай çул ӳсекен курăксен пĕтĕмĕшле лаптăкĕнчен (9700 гектар) пĕрре виççĕмĕш пайне яхăн çулнă, пĕр çул ӳсекен курăксене çулма тытăнаççĕ кăна-ха.

**– Владислав Кириллович, юлашки вăхăтра выльăх апатне çĕнĕлле хатĕрлесси кун йĕркинче пĕрремĕш тăрать. Çакăн сăлтавĕ çинче тĕплĕнрех чарăнса тăрсан ытлашши пулас çук.**

– Сăмах кунта Чулхула облаçĕнчи «Навигатор» компани туса кăларакан химилле консервантсем пирки пырать. Кальци пропионачĕпе усă курса силос, сенаж хатĕрлеме пулать. Пропионовăй кислотапа вара утă хатĕрленĕ чух усă кураççĕ. Çавăн пекех тырра чĕрĕллех лайăх пахалăхпа упрама май парать вăл.

Çак органикăлла кислоталлă препаратпа усă курни питĕ меллĕ. Çанталăк кăçал та, ав, çумăрлăрах тăрать. Выльăх апатне васкаса хатĕрленĕ май ăна чĕрĕрех чухнех хывса хăварни те пулмасть мар. Ку мĕн патне илсе пырать. Выльăх апачĕн пахалăхĕ çухалать, вăл çĕрме пултарать. Çапла майпа ĕçлени те сая кайма пултарать. Нӳрĕкĕ пысăк пулнипе сивĕ хĕлсенче выльăх апачĕ шăнса ларма та пултарать. Ку вăл выльăх апатне халиччен хăнăхнă меслетпе хатĕрлесен.

«Навигатор» компани сĕнекен консервантсемпе усă курса хатĕрленĕ выльăх апачĕ вара çухатусăр пулать, вăл лайăх упранать. Хăнăхнă меслетпе утта, тĕслĕхрен, 16-17 процент нӳрĕклĕхпе хатĕрлеме юрать пулсан, консервантпа вара утта 23-25 процент чухлĕ нӳрĕкпе тюка хывма пулать. Вăл çĕрмест, пăсăлмасть. Мĕншĕн тесен çав консервантсенчи органикăлла кислотасем выльăх апатне уншăн сиенлĕ микробсенчен çулталăк хушши сыхлама пултараççĕ.

Ку çеç те мар: выльăх апатне консервантпа хатĕрлени халиччен хатĕрленĕ меслетрен темиçе хут йӳнĕрех ларать. Унпа усă курнă хуçалăхсен опычĕ çакна кăтартса парать, йăлана кĕнĕ технологипе хатĕрленĕ выльăх апачĕн 30-40 процентĕ сая каять пулсан, консервантсемпе усă курса хатĕрленĕ выльăх апачĕ 8 хут йӳнĕрех ларать. Тутлăхлă веществосем те выльăх апатĕнче кирлĕ пек упранаççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ çак консервантсемпе хатĕрленĕ апата выльăхсем юратсах çиеççĕ, унти тутлăхлă веществосем продуктивлăха куçаççĕ. Акă ăçта вăл хĕлле сĕт ытларах суса илмелли, выльăхсен ӳтхушаслăхне хăпартмалли çăл куç.

Асăннă меслетпе пĕлтĕр пирĕн районта «Герой» çеç усă курчĕ. Çакăнта çырни пуш сăмахсем маррине вĕсем хăйсен опычĕпе курса ĕненчĕç. Çавăнпах ĕнтĕ кăçал та вĕсем кальци пропионатне 3500 тонна силос хатĕрлемелĕх илсе килнĕ. Çак кунсенче асăннă хуçалăх утă хатĕрлеме пропионовăй кислотана 120 литр кӳрсе килнĕ, 180 тонна утă тума çитет вăл, пĕтĕмпе асăннă препарата 400 литр илесшĕн вĕсем. Тырра та унпа усă курса упрама хурас ĕмĕтлĕ вĕсем.

Палăртмалла «Геройсен» ырă опычĕпе районти тепĕр 11 хуçалăх усă курма шутларĕ. Паянхи куна район пурĕ консерванта 4 тонна патне туянă. Ку вăл 20 пин тонна силос (сенаж) хатĕрлеме çитет.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Райадминистрацире**

## Хăш ял чи хитри пулĕ?

Район администрацийĕн пуçлăхĕ 2008 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче 403 № йышăну тунă. Сăмах унта районти ялсене тирпей-илем кĕртессипе смотр-конкурс ирттересси пирки пырать. Смотр-конкурса июлĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса август ăн 31-мĕшĕччен ирттерме палăртнă. Ятарлă положени çирĕплетнĕ.

Районти смотр-конкурс итогĕсене пĕтĕмлетме комисси йĕркеленĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г. Никитин ертсе пырать. Унăн çумĕ – район администрацийĕн капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Г.А. Павлов, секретарĕ – капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тĕп специалист-эксперчĕ Г.Г. Симаков.

**Хамăр инф.**

**Лару**

## Кашмашсенчен пĕтĕм республика вĕренет

Юлашки вăхăтра пирĕн пурнăçра улшăнусем пĕрин хыççăн тепри пулса иртеççĕ. Тĕслĕхлĕ библиотекăсене тин кăна тума пуçланăччĕ. Вĕсем паян районта 30. Çакнашкал ĕç халĕ республикăра культура учрежденийĕсенче пуçланчĕ. «Чăваш Республикинчи ялсенчи культура учрежденийĕсене аталантармалли мерăсем çинчен» 97-мĕш номерлĕ Указа Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров иртнĕ çулхи ноябрĕн 9-мĕшĕнче кăларчĕ. Асăннă Указпа килĕшӳллĕн республикăри чи пĕрремĕш модернизациленĕ база Культура çурчĕ пирĕн районти Кашмашра Республика кунĕ умĕн уçăлчĕ.

Кирек епле ĕçре те малта пыракан опытпа паллашни вырăнлă. Çакна шута илсе, Чăваш Республикинчи Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политики тата архив ĕçĕн министерстви çитес эрнере июлĕн 15-мĕшĕнче районсемпе хуласен администрацийĕсен культура пайĕсен пуçлăхĕсен, модернизациленĕ база культура учрежденийĕ уçма палăртнă республикăри ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе вĕсенчи культура учрежденийĕсен ертӳçисен анлă ларăвне Кашмашри Культура çуртĕнче ирттерме шутларĕ.

Хăнасем чи малтанах район центрĕнчи социаллă объектсенче пулса кураççĕ: физкультурăпа спорт комплексĕнче, кунта вырнаçнă Муркашри ачасен искусство шкулĕнче, районти историпе краеведени музейĕнче. Ун хыççăн район администрацийĕн ларусен залĕнче канашлăвăн пĕрлехи пайĕ иртет.

Кăнтăрла иртсен, хăнасем Кашмашри модернизациленĕ база Культура çуртĕнче пулаççĕ. Кунта культура учрежденийĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă хыççăн районти художество пултарулăх ушкăнĕсен концерчĕ пулать. Ăна Çатракассинчи купăсçăсем уçаççĕ. Унтан сцена çине кунти драма коллективĕн ушкăнĕ тухать. Канашлăва хутшăнакансем Ярапайкассинчи «Ĕкрем» халăх ансамблĕпе Муркашри «Расна» эстрадăпа фольклор ушкăнĕн пултарулăхĕпе те паллашĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Юбилей**

### *Саламлатпăр*

Турай ял тăрăхĕнчи Çуткӳл ялĕнче пурăнакан юратнă аттене, хуньстарике, асаттене, кукаçине, пиччене – **Петр Федорович ПОРТНОВА** 75 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Строительство бригадинче ĕç ĕмĕрне ирттерсе ял çыннисем валли сахал мар çĕнĕ çуртсем, производство объекчĕсем çĕклерĕн, пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн экономикине тĕреклетрĕн. Çав вăхăтрах тăван çемйӳ пирки те манмарăн. Сана пур ырă ĕçшĕн те тав туса татах та нумай çул çирĕп сывлăхлă пурăнма сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: икĕ ывăлĕ, хĕрĕ, кинĕ, кĕрĕвĕ, мăнукĕсем, шăллĕсем, тăванĕсем.**

---

Администрация МУП ЖКХ «Моргаушское» поздравляет **ЩЕГЛОВУ Галину Сергеевну** с 60-летием. Она в МУП ЖКХ «Моргаушское» работает в течение 30-ти лет. Она отзывчивый, добрый человек, ответственный и добросовестный работник. В течение многих лет она являлась заведующей бани села Моргауши. Руководство и коллектив предприятия высоко ценит ее и желает ей крепкого здоровья, долгих и счастливых лет жизни, дальнейших успехов в работе и всего самого наилучшего.